## **Пĕрремĕш рейс**

*Шофер юрри*

«Çĕн тырă, çĕн тырă, çĕн тырă...»
Машинаваскать çулпала.
Ăшра манăн çав тери ырă,
Ăшра шăранать савăк юрă...
Вĕçеç шухăшсем малалла.

Тыр-пулăмăр çитĕнчĕ хӳхĕм,
Хĕрӳ ĕç каймарĕ сая.
Пуçланчĕ вăл, пирĕн çĕн ӳсĕм,
Мĕнле кăна пулăпăр ӳлĕм!
Тек юлмăпăр эпĕр кая.

«Çĕн тырă, çĕн тырă, çĕн тырă...»
Машина васкать хам пекех.
Ăшра манăн çав тери ырă.
Ăшра шăранать савăк юрă...
Çитес çĕре çитĕпĕрех!

Аннемĕр-çĕршывăмăр, йышăн,
Ил ылтăн пек ырă тырра!
Сана çĕн хăват кĕртессишĕн
Ăна çитĕнтерчĕ ял-йышăм:
Телейĕмĕр пирĕн – санра!

«Çĕн тырă, çĕн тырă, çĕн тырă...»
Мотор, пул маттур та вăр-вар!
Ăшра манăн çав тери ырă,
Ăшра шăранать савăк юрă!..
– Хапха уç, хисеплĕ Вăрмар!

*Канаш, А. Пĕрремĕш рейс : Шофер юрри / А. Канаш // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 318.*